Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

14 (8178) № ✻ Юн кун, 2014 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Олимпиецсенчен тĕслĕх илетпĕр

Йĕлтĕрпе ăмăртрĕç, волейболла вылярĕç, пăшалтан печĕç

Социализмла Ĕç Геройне Е. Андреева асăнса ирттернĕ ăмăртури старт.

Пирĕн районта массăллă спорта аталантарассипе чылай ĕç пурнăçланать. Çак тĕллевпех çулталăк тăршшĕпе чылай ăмăрту иртет.

Иртнĕ шăмат кун, февралĕн 22-мĕшĕнче, Социализмла Ĕç Геройне Е. Андреева асăнса йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта пурĕ 22 команда хутшăнчĕ. Ăмăрту уçă шайра иртнĕрен Муркаша кӳршĕри Элĕк районĕнчен тата Мари Республикинчи Горномари районĕнчен килнисем те пулчĕç. Малти вырăнсене Çатракасси ял тăрăхĕн, Калайкассинчи вăтам шкулта тата Атапайри тĕп шкулта вĕренекенсен командисем йышăнчĕç. Мала тухнă ветерансене те уйрăммăн чысларĕç.

Çак кунах Муркашри çамрăк техниксен станцийĕнчи картинг секцине çӳрекенсем хăйсен пултарулăхне Е. Андреев хуçалăхăн йĕтемĕ çинче тĕрĕслерĕç. Чуманкасси ял тăрăхĕнче вара пулăçăсем ăмăртрĕç.

Каласа хăвармалла, февралĕн 22-мĕшĕнче республикипех Пĕрлехи сывлăх кунĕ пулчĕ. Çавăнпа та пирĕн районти ачасемпе çамрăксен шкулĕ – «Сывлăх» ФСК-ра уçă алăксен кунĕ иртрĕ. Кунта кашни çын тĕрлĕ услугăпа тӳлевсĕр усă курма пултарчĕ.

Вырсарни кун, Тăван çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунĕнче, «Росгосстрахăн» Чăваш Ĕнри филиалĕн куçса çӳрекен кубокне çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртрĕ. Ытти çулсенчи пекех ку ăмăртăва йышлăн пухăнчĕç – пурĕ 13 команда: Шупашкартан та, Мари Республикинчен та килнĕ. Кубока вара «Ремисс» команда çĕнсе илчĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕнчех Муркашри вăтам шкулти тирта пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл перекенсен ăмăртăвĕ иртрĕ. Çак ăмăртăва служба тивĕçне пурнăçланă чух пуçне хунă милици майорне Владимир Федорова асăнса кашни çулах ирттереççĕ. Кăçал унта районти ĕç коллективĕсен 11 команди хутшăнчĕ. Пĕлтĕрхи пекех «Сеспель» предприяти команди мала тухрĕ.

Иртнĕ ăмăртусемпе тĕплĕнрех хаçатăн шăмат кунхи номерĕнче паллаштарăпăр.

Черетлĕ ăмăртусем йыхравлаççĕ

Çитес шăмат кун, мартăн 1-мĕшĕнче, йăлана кĕнĕ тăрăх пирĕн районта тата тепĕр чаплă ăмăрту иртет. Йĕлтĕрçĕсем – шкул ачисен тата учительсен командисем Калайкассинче Ю. Федотова асăнса ирттерекен ăмăртăва хутшăнаççĕ. Эстафета дистанцийĕ паллă: тăватă çыннăн (2 арçын ачапа 2 хĕр ача; 2 арçынпа 2 хĕрарăм) пурĕ пĕрле 2, 3 çухрăм чупмалла. Пĕрремĕш старт 11 сехет çурăра пулать. Ку ăмăртăвăн тĕп спонсорĕсем кашни çулах – «Чувашия» фонд, «Интурист – Чебоксары» пĕрлешӳ тата Муркаш ентешлĕхĕн канашĕ.

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн шашкăлла выляссипе йăлана кĕнĕ турнир та кăçал мартăн 1-мĕшĕнче пулать. Турнира шашкăлла выляма юратакан кашни çын хутшăнма пултарать. Çĕнтерӳçĕсене хĕрарăмсем тата арçынсем хушшинче уйрăммăн паллăртаççĕ, кубоксем парса чыслаççĕ. Призлă вырăна тухнисене дипломсем те кĕтеççĕ. Ăмăртăва хутшăнас текенсен 10 сехете райхаçат редакцине пухăнмалла.

Мартăн 2-мĕшĕнче вара районти ĕç коллективĕсен тата шкулта вĕренекенсен хĕллехи спартакиадине ирттерме паллăртнă. Ăмăрту Муркашра иртет.

Н. НИКОЛАЕВА.

Хĕл ăсатăвĕ

Сывă пул, сивĕ хĕл!

Кăçал Хĕл ăсатăвĕн уявĕсем Муркашра февралĕн 28-мĕшĕнче, Мăн Çĕнтĕрте мартăн 2-мĕшĕнче иртеççĕ.

Уяв мероприятийĕсене хатĕрленсе ирттерме районта йĕркелӳ комитечĕ туса хунă. Унăн председателĕ – район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев. Февралĕн 25-мĕшĕнче йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна Ростислав Николаевич ертсе пычĕ. Ларура уяв мероприятийĕсене паллăртрĕç, ответлисене çирĕплетрĕç.

Муркашра Хĕл ăсатăвĕн уявне февралĕн 28-мĕшĕнче савăнăçлă лару-тăрура 11 сехет те 30 минутра уçаççĕ. Унччен Ярапайкассинчи информаципе культура центрĕ çумĕнчи «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ «Çăварни çитрĕ, çуркунне, уç алăкна!» ятпа театрализациленĕ представлени кăтартать.

Уява уçнă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, район пуçлăхĕ И. Николаев, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев, ял хуçалăх предприятийĕсен пуçлăхĕсемпе хăнасем салам сăмахĕсем каласçĕ.

Тĕрлĕрен конкурссем пулаççĕ. Йӳçкассинчи информаципе культура центрĕ çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕ, Орининчи ИКЦ çумĕнчи «Пучах» ансамбль, Ярапайкассинчи ИКЦ çумĕнчи «Екрем» халăх фольклор ансамблĕ, Кашмашри, Шетмĕпуçĕнчи ИКЦ çумĕнчи художество пултарулăх коллективĕсем хăйсен музыкăпа кану программисемпе паллаштараççĕ. Çăварние халалласа такмаксен конкурсĕ те пулать.

Кӳлнĕ лашасен конкурсне ирттерме паллăртнă.

Çав кунах районти тĕп больницăн пĕрлештернĕ командисем хушшинче волейбол ăмăртăвĕ иртмелле.

Конкурссемпе ăмăртусенче мала тухнисем парнесене тивĕçĕç.

Суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем, уйрăм предпринимательсем уява пухăннисене хăйсен продукцине сĕнĕç.

Мăн Çĕнтĕрте Хĕл ăсатăвĕн уявне пасар лапамĕнче мартăн 2-мĕшĕнче 11 сехетре уçаççĕ. Унччен Мăн Çĕнтĕрти ИКЦ çумĕнчи «Янаш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарать. Уява пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Мăн Çĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев, хăнасем саламлаççĕ.

Уяв концерчĕн программи анлă. Тренккăри, Шомикри Культура çурчĕсен, Вомпăкассипе Шупуçĕнчи ялти клубсен художество пултарулăх коллективĕсем, Калайкассинчи культура çурчĕн «Ентеш» юрăпа ташă ансамблĕ, Москакассинчи ИКЦ çумĕнчи юрăпа ташă халăх ансамблĕ ташă-юрă парнелеççĕ.

Уява пухăннисем тĕрлĕрен конкурссемпе вăйăсене хутшăнĕç, спорт ăмăртăвĕсенче вăй виçĕç, пултаруллисем парнесене тивĕçĕç.

Кӳлнĕ лашасен конкурсĕ те пулĕ.

Суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсем, уйрăм предпринимательсем тĕрлĕ тавар сĕнсе пурин кăмăлне те туллин тивĕçтерме тăрăшĕç.

Хамăр инф.

Раççей çĕнтерчĕ

Сочире иртнĕ 22-мĕш хĕллехи Олимп вăйăисенче Раççей спортсменĕсем малти вырăна тухрĕç. Пĕтĕмпе пирĕн атлетсем 33 медаль çĕнсе илчĕç. Çав шутра – 13 ылтăн, 11 кĕмĕл, 9 бронза медальсем. Кун пекки халиччен пулман.

Спортсменсем, туристсем ăмăртусем чи çӳллĕ шайра иртнине палăртаççĕ. Пĕтĕмпе стартсене 88 çĕр-шыври 2856 спортсмен тухрĕ. Ку та – хăйне евĕр рекорд.

Пĕтĕм тĕнчери олимп комитечĕн ертӳçи Томас Бах Раççей шантарнине пĕтĕмпех пурнăçларĕ тесе палăртрĕ. Ăмăртусем ирттермелли объектсене палăртнă вăхăта хатĕрлесе çитернĕ. Ытти çĕр-шывсенче çакăн йышши инфраструктурăна хатĕрлеме вун-вун çул кирлĕ пулнă пулсан, Сочире çакна çичĕ çулта тунă терĕ вăл.

Совет Союзĕнче Олимп вăйăи Мускавра 1980 çулта иртнĕччĕ. Çĕнĕ Раççей çакăн пек масштаблă 22-мĕш Олимп вăйăисене ирттерме пултарни пирĕнте кашнинчех мăнаçлăх туйăмĕ çуратать.

22-мĕш хĕллехи Олимп вăйăисене çӳллĕ шайра ирттерсе Раççей тĕнчери хăватлă çĕр-шывсен йышĕнче пулнине çирĕплетрĕ.

Раççей çĕнтерчĕ!

Республикăра

С. Енилина – финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнче 24 № Указ кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – Чăваш Республикин финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ пулма Светлана Александровна Енилинăна уйăрса лартнă.

Унччен Светлана Енилина ЧР Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ пулнă.

Çак Указ ăна алă пуснăранпа ĕçлеме пуçланă.

Хамăр инф.

Видеоконференци

«Муниципалитет пурлăхĕ – халăх харпăрлăхĕ»

Февралĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика районĕсемпе хула администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе видеоконференци ирттернĕ. Конференцире муниципалитет пурлăхне приватизацилессин тата çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленесси ыйтăвĕсене сутсе явна.

Муниципалитет пурлăхне 2013 çулта приватизациленин итогĕсем тата 2014 çулхи задачăсем çинчен республика пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана Енилина каласа панă.

Çурхи уй-хир ĕçĕсене хатĕрленес ĕçсем епле пыни пирки Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пĕлтернĕ.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби.

Саламлатпăр

Чи хаклă çыннăмăра, тăвана, мăнака – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Евдокия Кирилловна КИРИЛЛОВĂНА** 98 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Тавах Турра эсĕ пурришĕн, ырă кăмăлушăн, яланах тарават пулнишĕн. Мĕн пĕчĕкрен пуçласа 85 çулчченех тăван «Свобода» хуçалăхра вăй хунă, паян та район пурнăçĕпе кăсăклансах тăрать, хаçат-журнал вулать, выльăх-чĕрлĕх тытать. Тата нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

Саламлаканĕсем: кӳршĕри Ивановсен, Корнеевсен çемйисем.

Çырăнтару – 2014

Хаклă вулаканăм!

«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма март уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хакпа çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.

Малашне те пĕрле пулар!

Райхаçат редакцийĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

«Агрономсем, зоотехниксем, ветеринарсем кирлĕ»

Районта февралĕн 19-мĕшĕнче Пĕрлехи информаци кунĕ иртни, асăннă мероприятие ирттерме района республика тĕп хулинчен Чăваш Ен ял хуçалăх министрĕн çумĕ Ирина Кошкина ертсе пыракан ушкăн килни çинчен хаçатра çырнăччĕ. Ирина Николаевна информаци кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май ĕç коллективĕсенче тĕл пулусем тивĕçлĕ шайра, пуриншĕн те усăллă иртнине палăртрĕ.

Эпĕ вара Ирина Николаевнăшăн та, ял çыннишĕн те питех те çывăх ял хуçалăх, çурхи уй-хир ĕçĕсен ыйтăвĕсемпе калаçу пуçарас терĕм.

– Ирина Николаевна, юлашки вăхăтри, иртнĕ çулхи кăтартусене тишкерсе хак панă май ял хуçалăхĕнчи хальхи пĕтĕмĕшле лару-тăрава мĕнле хак пама пултаратăр?

– Лару-тăру чаплă тесе калама пултараймастăп. Уйрăмах выльăх-чĕрлĕх отраслĕ тĕлĕшпе татса памалли ыйтусем пур. Выльăхсен йышнех илер. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче выльăхсен йышĕ чаксах кайни палăрмасть пулсан, уйрăм çынсен хуçалăхĕсенче тытса усракан мăйракаллă шултра выльăхсен шучĕ чакнин тенденцийĕ уçăмлăнах палăрать. Кун пек лару-тăрупа лăпланса ларма юрамасть. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсене ытларах тимлĕх уйăрмалла. Ку вăл пĕтĕмпех продукци туса илессипе çыхăннă. Республика Пуçлăхĕ те, Правительство шайĕнче те выльăхсен йышне чакарма парас мар тесе конкретлă мерăсем палăртаççĕ. Çитменнине хальхи вăхăтра ял çыннисенчен сĕте пĕр килограмне 20 тенкĕрен кая мар тӳлесе туяннине япăх темелле мар. Ку вăл паян ял çыннишĕн – хушма тупăш çăл куçĕ.

– Çĕр ĕçĕ, ӳсен-тăран продукцийĕ туса илес тĕлĕшпе мĕн калама пултаратăр?

– Пур чухне те хамăрăн ӳрĕксӳрĕклĕхе çанталăк çине йăвантарма кирлĕ мар. Çапах та çакна йышăнмах тивет. Иртнĕ çулталăк пирĕн тăрăхри çĕр ĕçченĕшĕн ăнăçлах пулаймарĕ. Çу кунĕсем çумăрсăр килчĕç. Çавна май республикипе 35,6 пин гектар çинчи тĕш тырă культурисем шар курчĕç. Кĕркунне ял хуçалăх культурисене пуçтарса кĕртнĕ чухне вара çумăр тăтăш çуса тăчĕ, çухатусем сахал мар пулчĕç. Апла пулин те пур ĕçе те тĕплĕ хатĕрленсе, васкаварлă туса ирттерекенсем мĕн акса-лартса хăварнине хăй вăхăтĕнче тата çухатусемсĕр пуçтарса кĕртме пултарчĕç.

Тепĕр ыйту çинче те чарăнса тăмалла. Çĕр лаптăкĕсемпе туллин, тĕллевлĕ усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра пачах усă курмасăр выртакан хуçасăр çĕр лаптăкĕсем те çук мар. Вĕсене пурне те муниципалитет харпăрлăхне çирĕплетмелле, пусă çаврăнăшне кĕртмелле. Пушă выртакан çĕр лаптăкĕсем республика территорийĕнче пулмалла мар. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та ку ыйтăва çивĕч лартать.

– Ирина Николаевна, хальхи вăхăтра ял хуçалăхĕнче тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕ ăста çамрăк кадрсем çитменни пысăк проблемăсенчен пĕри пулса тăчĕ.

– Ку чăнах çапла. Кадрсем сахал. Хуçалăхсенче уйрăмах агрономсем, зоотехниксем, ветеринарсем, механизаторсем çитмеççĕ. Паллă ĕнтĕ, çакă вăл чи малтанах ял хуçалăхĕнче вăй хуракансен ĕç укçи шайĕ пĕчĕккипе те çыхăннă. Акă халĕ вăл вăтам шутпа уйăхне 10737 тенкĕпе танлашать. Хăш-пĕр çĕрте унран та сахалрах. Кунта тĕп принцип çапла пулмалла тесе шутлатăп: тивĕçлĕ дисциплина, тивĕçлĕ ĕç, уннăн вара тивĕçлĕ ĕç укçи те.

Акă курăмлă тĕслĕх. Паян кăна «Путь Ильича» агрофирмăра пултăмăр. Çынсем дисциплинăна пăхăнса ответлăха туйса ĕçлеççĕ, вăхăтра тата йĕркеллĕ ĕç укçи илеççĕ, кадрсем енӗпе те ыйту тăмасть кунта.

Ял хуçалăхне çамрăк специалистсемпе тивĕçтерес, çамрăк çемьесене ялта тĕпленсе пурăнма майсем туса парас тесе çĕр-шыв, республика шайĕнче тĕрлĕ программăсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Кусем чи малтанах çамрăксене çурт-йĕр çавăрма пулăшассипе çыхăннă. Федерацин «Социальное развитие села до 2013 года» тĕллевлĕ программипе, Федерацин «Жилище» тĕллевлĕ программин «Обеспечение жильем молодых семей» подпрограммипе патшалăх пулăшăвне тивĕçнисем сахал мар. Кун пек программăсем те, патшалăх пулăшăвĕ те малашне те пулĕç. Çавăнпа та çамрăксене пуçаруллăрах, хăюллăрах пулма, ял хуçалăхĕнче харпăр хăйĕн ĕçне йĕркелессипе те çивĕчрех пулма сĕннĕ пулăттăм.

– Çаннипех те ĕнтĕ паян ӳсен-тăран продукцийĕ аксалартса ӳстерес, çемье фермисем йĕркелесе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес шухăшлисене патшалăх пулăшусăр хăвармасть, миллионшар тенкĕ уйăрса парать. Çуллен республикăри вун-вун çын тивĕçет çак пулăшăва. Пирĕн районта та кун пек кисем пур. Анчах та вĕсем пурте уйăрса панă укçа-тенкĕпе тĕллевлĕ усă кураççĕ-и-ха?

– Ыйтăвĕ тĕрĕсех. Малашне уйăрса панă укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнине çирĕпрех тĕрĕслесе тăма палăртатпăр. Кунпа пĕрлех тĕрĕслесе тăрассипе кăна мар, укçа-тенкĕне кама уйăрса парассипе те тĕрĕслев витĕмлĕхĕ çирĕпрех пулмалла тесе шутлатпăр. Патшалăх хывнă укçа-тенкĕ чăннипех те усă кӳтĕр.

– Ирина Николаевна, çурхи кунсем çитсе килеççĕ. Сисмĕпĕр те, хирсенче ака агрегачĕсен сасси те янăрама пуçăнĕ. Çавăнпа та кăçалхи çурхи ака-суха ĕçĕсем пирки тĕплĕнрех чарăнса тăма ыйтнă пулăттăм.

– Малтанах çавна палăртса хăварас тетĕп. Ака ĕçĕсен калăпăшне иртнĕ çулхинчен самай анлăлатма палăртатпăр. Пĕтĕмĕшле илсен ака лаптăкĕ 570 пин гектарпа танлашмалла. Пĕлтĕрхинчен ку вăл 20,7 пин гектар нумайрах. Вăл шутран тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсем 276,5 пин гектар, çĕр улми 41,5 пин гектар, пахча çимĕç 4,6 пин гектар, выльăх апачлĕх культурăсем 237 пин гектар йышăнмалла. Кусем вĕсем пурте 2013 çулхинчен нумайрах.

Çак вăхăта çурхи тĕш тырăпа пăрça йышши культурăсен вăрлăхĕ кирлин 97 проценчĕ чухлĕ пур. Кондиции ларакан вăрлăх 56 процент. Минераллă удобренисем 20,2 процент, дизель топливи 32,2 процент, бензин 26,2 процент янтăланă. Кăтартусем иртнĕ çулхинчен самай пысăкрах. Ял хуçалăх культурисен вăрлăхне туянас, минераллă удобренисем кӳрсе килес ĕççем пыраççĕ.

Çурхи уй-хир ĕçĕсене ирттерме (запас пайсем, çунтармалли-сĕрмелли материалсем, хими им-çамĕ, удобренисем, вăрлăх туянма) пĕтĕмпе 1 млрд. та 466,2 млн. тенкĕ кирлĕ пулать. Вăл шутран кредит укçи-тенки 902,2 млн. тенкĕ. Республикăри ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсем çурхи уй-хир ĕçĕсене ирттерме 2013 çулхи октябрьтен тытăнса 2014 çулхи январь уйăхĕччен илнĕ кĕске вăхăтлăх кредитсен калăпăшĕ 142 млн. тенкĕпе танлашрĕ.

Февраль уйăхĕ вĕçленичченсубсиди илекенсене 34 млн. тенкĕ ытла уйăрса пама пăхнă. Вăл шутран çĕрсен пахалăх шайне тĕпрен лайăхлатма – 23,6 млн тенкĕ, инвестици кредичĕсем – 6,5 млн. тенкĕ. Февраль уйăхĕнче субсидисен пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 40 млн. тенкĕне яхăн, март уйăхĕнче 145 млн. тенкĕ пулĕ.

Апла пулсан никам та пулăшусăр юлмасть. Пулăшу майĕсемпе туллин усă курса çурхи ака-суха ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă ирттерме май пулĕ.

В. ШАПОШНИКОВ
каласнă.



Сăмах май. 2014 çулта пирĕн районта ака лаптăкĕсем кĕрхи культурăсене те шутласан пĕтĕмпе 25,7 пин гектар йышăнмалла. Кĕрхи тĕш тырă культурисене иртнĕ кĕркунне 4881 гектар акса хăварнă. Ку вăл – республикăри чи пысăк кăтартусенчен пĕри. Малтанласа палăртнă тăрăх кĕрхи культурăсен калчисем аванах хĕл каçаççĕ, вĕсенчен япăх мар тухăç илме шанăç пур. Хуçалăхсенче çур аки ирттерме вăрлăх 2966 тонна е 100 процент хатĕрленĕ. Ăна пĕтĕмпех тĕрĕслеттернĕ. Вăрлăхăн 41 проценчĕ ака кондицине ларать. Халĕ хуçалăхсенче вăрлăха тасатса кондицие çитерес, минераллă удобренисем кӳрсе килес ĕççем пыраççĕ.

Саламлатпăр

Анатри Панклире пурăнакан **Раиса Николаевна ЛУКИНАНА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кунçул, хушпу тенкисем пек çутă пурнăç, нихăçан иксĕлми телей, канлĕ ватлăх сунатпăр. Утас çулу такăр пултăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçланса пытăр, телей çăлтăрĕ яланах юнашар çӳретĕр. Турă яланах вăй-хал патăр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

Салампа: 2 ывăлĕпе 2 кинĕ, йăмăкĕ, 3 шăллĕпе 3 кинĕ, мăнукĕсем.

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, юратнă та хиселлĕ аннене, аппана, хĕрĕме, тăванăмăра – Турай ял тăрăхне кĕрекен Уйкас ялĕнче пурăнакан **Вера Николаевна ПЕТРОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр. Чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, çуркунне пек чĕрĕлĕхпе илемлĕх, кăвак лаша туртайми телей тата кашни кĕсьере туп-тулли укçа-тенкĕ сунатпăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырри сан валли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса ирттĕр, кĕрекӳ яланах тулăх пултăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн чи пысăк телей те савăнăç.

Ăшă саламп: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕ, икĕ шăллĕ, пускамăшĕ тата мĕн пур тăванĕ.

Хиселлĕрен те хиселлĕ, ылтăнкĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – Очăкасси ялĕнче пурăнакан **Елена Виссарионовна ГРИГОРЬЕВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити тайма пуç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, 4 йăмăкĕ, 2 шăллĕ, Любимовсем, Косаревсем, Тихоновсем тата çывăх тăванĕсем.

В этот прекрасный день от всей души хотелось бы поздравить с юбилеями маму – **ФЕДОРОВУ Альбину Алексеевну** с 50-летием и папу – **ФЕДОРОВА Олега Макаровича** с 55-летием, проживающих в с. Б. Сундырь. Пожелать им всего, чего только можно пожелать: приятного окружения, любви, уважения, крепкого здоровья, счастья, добра! Прожить еще столько же лет, без горя, несчастий и бед. Мы наполним вашу жизнь любовью, ведь для нас вы самые дорогие и родные люди на земле!

С теплыми поздравлениями:
2 сына, невестки, внуки, внучка, родные и близкие.

Кама мĕн хумхантарать

2013 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче районта иртнĕ Пĕрлехи информаци кунĕнче граждансем панă ыйтусен хуравĕсем

– Электроэнергишĕн тӳлемелли çĕнĕ правилăсене вăя кĕртнĕ май счетчик кăтартăвĕсене парасси чăрмавлă – телефонпа пĕлтермелле е кайса памалла, кĕтме тивет. Çак улшăнусем мĕнпе сăлтавланнă, çĕнĕлĕхсем татах пулĕç-и?

В. МАТВЕЕВ.
Чуманкасси ялĕ.

ЧР Конкуренци политикин тата тарифсен патшалăх службинчен пĕлтереççĕ:

– Асăннă ыйтусене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтермелли правилăсем йĕркелеççĕ. Вĕсемпе килĕшӳллĕн электричествăпа усă курнине шута илекен прибор пулсан потребителĕн унăн кăтартăвĕсене уйăхсерен килĕшӳре палăртнă вăхăтран кая юлмасăр пĕлтермелли ирĕк пур. Тӳлев виçине шăпах çав прибор кăтартăвĕсем тăрăх палăртаççĕ. Енчен те потребитель кăтартусене памалли правăпа усă курмасан тӳлев виçине малтанхи уйăхсенчи вăтам кăтартусене тĕпе хурса палăртаççĕ.

Потребительсене меллĕ пултăр тесе Чăваш энергосбыт компанийĕ приборсен кăтартăвĕсене пĕлтермелли темиçе мелпе усă курма сĕнет: компани офисĕсем урлă, телефонпа е электрон почтипе, СМС-па, пĕрлехи информаци центрĕ урлă...

* * *

– Выльăх масарĕ тавра санитарипе хӳтлĕх зонине 500 метр таран чакарма май пур-и? Халĕ вăл 1 километр пулнă май ялсен чиккине сарма, ытти ĕçсем пурнăçлама чăрмантарать.

А. СЕМЕНОВА.
Анаткас Апаш ялĕ.

ЧР Патшалăх ветеринари службинчен пĕлтереççĕ:

– Выльăх масарĕсен санитарипе хӳтлĕх зонин лаптăкне улăштармалли процедурăна саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçламалла. Роспотребнадзор управленине тивĕçлĕ документсем тăратмалла. Унтан пĕтĕмлетӳ тата тĕпчев кăтартăвĕсене илнĕ хыççăн Роспотребнадзора асăннă ыйтупа тухмалла. Унта йышăну тунă хыççăн выльăх масарĕ тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене пурнăçлама тивет. Масар лаптăкне пĕчĕклетессипе çыхăннă информацие Роспотребнадзорăн республикăри управленийĕн сайтĕнче тупма пулать.

Ыйтусем хуравсăр юлмĕç

Районта информаци кунĕсем тăтăшах пулаççĕ. Ял çыннисем вĕсенчен конкретлă пулăшу курасшăнни палăрать. Акă Турай ял тăрăхĕнчи Анаткасси ялĕнчи Октябрь урамĕнче электричество энергийĕ çитсех каймасть. Çавна пула тепĕр чух кĕпе çумалли машина та ĕçлеймест.

Б. АНДРЕЕВ,
депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ.

Борис Васильевич ыйтăвĕ çине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительствăпа обществăлла инфраструктура аталанăвĕн управленийĕн пуçлăхĕ В. НИКИТИН хуравлать:

– Пирĕн ушкăн пĕрлехи информаци кунне Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче ирттерчĕ пулин те, асăннă ыйтăва та иккĕмĕш вырăна хăвармастпăр. «Чувашэнерго» акционерсен уçă обществин Çурçĕрти электричество сечĕсен Муркашри филиалĕн пуçлăхĕ В. Егоров ку ыйту тĕлĕшпе çывăх вăхăтрах вырăна тухса тĕрĕслев ирттерме пулчĕ. Ун хыççăн тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвăпăр. Çакна çирĕплетсе калатăп, ял çыннисен çутă сахал тесе шар курмалла мар.

Мăн Сĕнтĕрти кашни тĕл пулурах ял çыннисем килти хушма хуçалăхĕсене аталантарма патшалăх пулăшăвĕпе анлă усă курнине палăртни – ырă пулăм. Ял тăрăхĕсенче патшалăх пулăшăвĕпе анлă та тухăçлă усă кураканнисем йышлани ялта пурăнакансем пурнăç улшăнăвĕсенчен юлманнине çирĕплетет.

А. БЕЛОВ.

Пысăк тав

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх кооперативĕ Социализмла Ĕç Геройне Е.А. Андреева асăнса районта мала тухассишĕн йĕлтĕр-çĕсен ăмăртăвне ирттерме пулăшнăшăн «Свобода», Суворов ячĕпе, Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх кооперативĕсене, МСО «Моргаушская», МУП «Рынок «Моргаушский» предприятисене тата Африкан Вениаминович Андреева тав тăвать.

Райадминистрацире

Хисеп грамотипе наградăланă

Çамрăксене çарпа патриотика воспитанийĕ пама тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2014 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнчи 146 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

– **Константин Иванович ПЕТРОВА**, «Инвалиды войны» обществăн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн председательне;

– **Виталий Геннадьевич ГРАЧЕВА**, «Инвалиды войны» обществăн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн членне.

Район администрацийĕн 2014 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнчи 142 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çынсен сывлăхне сыхлассине тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Дина Александровна ВАСИЛЬЕВĂНА**, Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле врач практикин уйрăмĕн медицина сестрине;

– **Ольга Николаевна СОРОКИНĂНА**, районти тĕп больницăн процедура сестрине.

2. Халăх пултарулăхне аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн – **Клара Александровна СМЕЛОВĂНА**, Оринин ял тăрăхĕнчи Оринин информацип культура центрĕ çумĕнчи ветерансен «Оринен» халăх хорĕн участникне.

СМЭВ

Çыхăну майĕсем меллĕрех

Раççей Федерацийĕн Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерстви Чăваш Ен Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствине ведомствăсем хушшинчи электрон хутшăнăвĕн системине (СМЭВ) пурнăçа кĕртессипе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тав тунă. Раççей çыхăну тата массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕ Алексей Козырев алă пуснă официаллă çырăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ячĕпе янă.

Уйрăмах р-сведенисене тестлассине вăхăтра вĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Ку сведенисене çынсене услугăсемпе тивĕçтернĕ чухне федерацин влаç органĕсем регион органĕсенчен ыйтса илеççĕ.

Р-сведенисене тестлассине Чăваш Енре çĕр-шыври ытти регионсемпе танлаштарсан чи малтисенчен пĕри – 2013 çулхи декабрь вĕçĕнче вĕçленĕ. Çапла вара республика федераци органĕсене СМЭВ-па 18 р-сведенипе тивĕçтерме пултарать.

Аса илтеретпĕр, 2012 çулхи июльтен тытăнса влаç органĕсен çынсенчен ытти органсенче пур сведенисене ыйтмалла мар. Чиновниксем ку информацие пĕр-пĕринчен СМЭВ урлă илме тивĕç.

Пенси фондĕнче

Черете çырăнма – Интернет урлă

Малашне çĕнĕ электрон сервисĕпе усă курса граждансен Пенси фондне йышăнăва пыма малтанах черете çырăнса хума май пур. Çавна валли вĕсем хăйсемшĕн меллĕ куна, вăхăта тата мĕнле документсемпе справкăсем кирлине унччене палăртса хума пултараççĕ.

Черете çырăнас тесен Пенси фончĕн сайтне кĕмелле. Унăн адресĕ: www.pfrf.ru/pred zapis/. Хальлĕхе сервис сăнавлă майпа ĕçлет. Апла пулин те çĕнĕ услугăпа усă куракансем районта пур ĕнтĕ.

Граждансем çавăн пекех Раççей Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленине 62-8-91 телефонпа шăнкăравласа та йышăнăва çырăнма пултараççĕ. Енчен те унччен йышăнăва çырăннă çын тĕрлĕ сăлтава пула унта пыма пултараймасть пулсан унăн кун пирки кая юлмасăр пĕлтерес пулать.

Тӳлекенĕн – хăйĕн «кабинет»

Ĕç паракансемпе предпринимательсем валли Пенси фончĕн сайтĕнче chuvash.lkp.pfrf.ru адреспа электрон сервисĕ вырнаçтарнă. Чăваш Республикинче «Личный кабинет плательщика» майĕсемпе 4 пин организацип предприниматель усă курать ĕнтĕ. Меллĕ сервиспа 16,5 пин хут усă курнине регистрациленĕ. Муркаш районĕнче «Личный кабинет плательщика» сервиспа 113 страхователь пĕтĕмпе 285 хут усă курнă. Çакă вăл РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ 2013 çулта пурнăçа кĕртнĕ пилот проекчĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать.

Хальхи вăхăтра Пенси фончĕн сайтĕнчи «Личный кабинет плательщика» сервиспа Раççейри пур страхователь те усă курма пултарать. Кунта ĕç паракансем страховани взносĕсем тӳлессипе парăмсем пуррипе çукки пирки пĕлме, тӳлевсен тĕрĕслĕхне танлаштарса пăхма, квартал отчечĕсене тĕрĕс е тĕрĕс мар тăратнине палăртма пултараççĕ.

«Личный кабинет плательщика» электрон сервисĕпе усă курас тесен РФ Пенси фончĕн управленине заявлени çырса памалла. Енчен те тӳлевçĕсем документсене электрон мелĕпе тăратасси пирки Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă пулсан, вĕсем регистрациленме заявкăна Интернет урлă та ярса пама пултараççĕ.

Пенси фончĕн районти управленийĕ.

Налук пӳлĕмĕнчен

Раççейри федераллă налук службин сайтĕнче юлашки вăхăтра тепĕр çĕнĕлĕх ĕçлеме пуçларĕ: «Налук тӳлекен юридически лицо пӳлĕмĕ». Çак интернет-сервис бюджет умĕнче налуксемпе тĕрлĕ парăм пуррине, тӳлемелли налук суммине, парăмсем тĕлĕшпе сиксе тухакан ыйтусене пĕрремĕш утăмранах пĕлме пулăшать.

Çĕнĕлĕхпе усă куракансем ЕГРЮЛтан тата ЕГРНран çырса илнине те кăларса илме пултараççĕ.

Ыттисемпе пĕрлех сайтри улшăнупа налуксен счетне пĕлме, налуксем тӳлессипе гражданла тивĕçе епле пурнăçлани пирки хут илме майĕ пур.

«Налук тӳлекен юридически лицо пӳлĕмĕ» уçса унта епле кĕрессипе унта кĕнисемпе е налук органĕсемпе канашласа пăхăр.

Н. ВАСИНА.

Спорт

Çаклан пулă – пысăкки те, пĕчĕкки те





Чи пысăк тата чи пĕчĕк пулă тытакансене, пулă пуринчен ытларах тытакансене, чи аслипе чи кĕçĕннине те палăртрĕç Чуманкасси ял тăрăхĕнче иртнĕ пулăçăсен ăмăртăвĕнче. Ăмăрту, кăçалхипе иккĕмĕш хут, уяв пекех иртрĕ. Шăмат кун, февралĕн 22-мĕшĕнче, 60 çынна яхăн – ку тăрăхри ялсенчен кăна мар, Йӳçкасси тата Муркаш ял тăрăхĕсенчи пулăçăсем те, Чуманкасси ялĕнчи Казанчăк пĕви çине пухăнчĕç. Хăшĕсем – ăмăртăва хутшăнас тĕллевпе, теприсем – хăйсене валли пулă тытма, виççĕмĕшĕсем – курма. Çапла вара палăртнă вăхăтра пулăçăсем пĕве çинче унта-кунта вырнаçса ĕçе пикенчĕç.

Ачасем те пурччĕ кунта. Акă Пачкасси ялĕнчен килнĕ Ксюша Васильева, алла вăлта тытман пулин те, пулăçăсене курма интереслине палăртрĕ. Çулла вара хĕр ача çемйипе пĕрле пулла çӳреме кăмăллать мĕн. Чуманкассинче пурăнакан ветеран педагог Людмила Михайлова та канăва активлă ирттерме шутланăран ывăлĕпе пĕрле пĕве çине килнĕ...

– Чуманкассисем эпир «сывă чирпе» çке-ха. Пăрапа пуринчен васкавлăрах пăр шăтаракана та хăвăрт палăртрĕç.

Грамотăсемпе хаклă парнесем призлă вырăн йышăннисене нумай кĕттермерĕç. Чи нумай пулă тытакан Отарккăри Андрей Аверкиев пулчĕ – 2750 г, Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Евгений Павлов тытнă пулăсем пурĕ 2600 г тайрĕç, Отарккăри тепĕр пулăçă Николай Афанасьев 2050 г тытнă.

Çак кун Андрей Аверкиевăн кунĕ пулчĕ пулас: чи пысăк пулă та унăн, пăр шăтарассипе те вăл ыттисенчен мала тухрĕ.

Чи пĕчĕк пулă вара 4-мĕш класра вĕренекен Максим Васильевăн вăлтине çакланнă.

Ăмăрту вĕçленчĕ, хăйсен сезонĕ вĕçленичченвара кунти пулăçăсене Казанчăк çинче кашни кунах курма май пулĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Сăн ӳкерчĕксенче: акă вĕсем – чи нумай пулă тытакансем; Муркаш ял тăрăхĕнчи А. Ермолаевпа Д. Николаев чи аслă тата чи кĕçĕн хутшăнакансем; кашни пулă – савăнăç; таврари пулăçăсене «чирлеттерекенни» – В. Иванов.

Республикăра малтисен йышĕнче

Февралĕн 15–16-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче йĕлтĕрпе чупассипе Чăваш Республикин чемпионачĕ иртрĕ. Унта пирĕн район йĕлтĕрçисем те активлă хутшăннă.

Ярапайкасси, Муркаш, Калайкасси тата Çатракасси вăтам шкулĕсенче вĕренекенсем – пурĕ 33 ача икĕ кун республикăри ытти районсенчи йĕлтĕрçĕсемпе вăй виçнĕ.

Команда кăтартăвĕсемпе пирĕн район иккĕмĕш вырăна тухнă. «Малта – Шупашкар районĕ, виççĕмĕш вырăнта – Вăрнар районĕ. Кăçал Канашсене çĕнтерме пултарни те пирĕншĕн питĕ лайăх. Вĕсем нумай чух пирĕнтен маларах тухатчĕç», – пĕлтерчĕ Ярапайкасси шкулĕнче вăй хуракан тренер преподаватель Эдуард Гордеев ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарнă май.

Ачасен уйрăм результачĕсем вара çапла: Муркашри вăтам шкулта вĕренекен Светлана Иванова (тренерĕ Игорь Смирнов) 3-мĕш вырăн, Ярапайкассинчи вăтам шкулти Светлана Соколова (тренерĕ Эдуард Гордеев) 2-мĕш вырăн, Калайкассинчи вăтам шкулти Анастасия Ксенофонтова (тренерĕ В. Моисеев) 2-мĕш вырăн йышăннă. Çатракасси шкулĕнче вĕренекен Стас Степанов (тренерĕ Н. Степанов) вара пĕрремĕш кунхине классика мелĕпе хăйĕнчен аслăрах йĕлтĕрçĕсене парăнтарса, Канаш районĕн йĕлтĕрçинчен финиша пĕр çеккунт кăна каярах çитсе 2-мĕш вырăн йышăннă. Иккĕмĕш кунхине пултаруллă спортсмен ирĕклĕ майпа ăмăртса 3-мĕш вырăна тухнă.

Çакăн пек ăмăртусене хутшăнмасăр, паллах, пирĕн район йĕлтĕрçисем республикăра мĕнле шайрине палăртаймăн, анчах та нумай чух укçа-тенкĕ тата транспорт ыйтăвĕ тухса тăрать. Ку хутĕнче те тренерсемпе спортсменсен ашшĕ-амăшĕсем пĕр-пĕрне ăнланса тата çак ăмăрту ачасемшĕн пĕлтерĕшлине шута илсе Шупашкара хăйсен кĕсйинчи укçа-тенкĕпех çитсе килнĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Чемпион призĕшĕн

Муркаш тăрăхĕ спортăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе туслă пулни тата кашни енпех ăнăçусем туни хаçат вулакансене савăнтаратех ĕнтĕ. Вĕсене те спортăн çав тĕсĕсемпе туслашма хистет.

Нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче Йӳçкассинчи Культура çуртĕнче шашкăлла вылясси пысăк опыт пухнă ăстасем хăйсен черетлĕ ăмăртăвне пухăнчĕç. Çак кун шашистсем Чăваш Республикинчи «Урожай» ирĕклĕ спорт обществин шашкăлла вылясси икĕ хут чемпионĕн тата çак вăйăн район шайĕнчи ултă хут çĕнтерӳçин, шашкăлла вылясси спорт мастерĕн кандидачĕн А. Ермолаевăн призĕшĕн ăмăртрĕç.

Вăйăсем пĕрремĕш парттиренех çивĕччĕн пуçланчĕç. Кашни тĕл пулурах çиччĕ виçни тĕп вырăнта пулчĕ. Çĕнтерӳçĕсем вара юлашки вăйăсенче çеç палăрчĕç. Çакă шашкăлла вылясси районта иккĕмĕш вырăнта пулманнине çирĕплетет.

Пĕтĕмлетӳ вара ума çапларах ӳкерчĕк кăларчĕ. Ăмăртура «Оринино хуçалăхран килнĕ А. Прокопьев ыттисенчен ăстарах пулса тĕп приза çĕнсе илчĕ. Ун хыççăнхи вырăнсенче – Мăн Сĕнтĕртен килнĕ В. Афанасьевпа В. Егоров шашистсем.

Ăмăрту йĕркелӳçи çĕнтерӳçĕпе призерсене вымпелсемпе, медальсемпе тата Хисеп хучĕсемпе наградăларĕ. Ыттисем район чемпионĕн аллинчен ятарлă значоксене тивĕçрĕç.

А. ПЕТРОВ.

Ултав суд тенкелĕ çине лартать

Район судĕнче

Çынна улталаса пурăнни, паллах, тӳрĕ çулпа илсе пымасть. Çакăн пек хăтланусем, маларах-и, каярах-и, пур пĕр саккунпа тĕл пултарса суд тенкелĕ çине лартаççĕ. Нумаях пулмасть Муркаш район сучĕ чикансен ултавлă ĕçĕсене тишкерсе приговор вуларĕ.

Икĕ чикан хĕрарăмĕ, иккĕшĕ те икшер пĕчĕк ачаллăскерсем, Мари Эл Республикинчи Горномарийски районĕнчен пирĕн пата пĕр тĕллевпе килнĕ – çынсене улталаса вĕсен пурлăхне хăйсен аллине илме. Шкулта пĕр класс та вĕренменни вара вĕсене улталама чăрмав кӳмен. Камсен шанăçне кĕме пултарассине те лайăх пĕлнĕ вĕсем, çавăнпах ватă çынсене «шыранă».

Çапла пĕлтĕрхи октябрĕн 23-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен икĕ хĕрарăм хăйсен пĕрремĕш ĕçне пурнăçлаççĕ. Муркаш районĕнчи Мăн Хураçка ялне килме машина тара тытаççĕ. Центральная урамри пĕр киле ирĕккĕнех кĕреççĕ. Ĕçе маларах шутласа хунăскерсем кашни хăйĕн рольне лайăх пĕлсе вылять. Аслăраххи кил хуçине тата унăн тăванĕсене «усалтан тата чир-чĕртен тасатса» укçаллă тата апатçимĕçлĕ пулать. Ку вăхăтра кĕçĕнни пӳртри лару-тăрава тишкернĕ май кил хуçи арăмĕн сывлăхĕ питĕ япăххине каласа тăрать. Çакна пурнăçланипе çырлахса хĕрарăмсем 1000 тенкĕ тата 20 штук чăх çăмарти илсе тухса каяççĕ.

Çав уйăх вĕçĕнче вĕсем пирĕн района тепĕр хут килеççĕ. Хĕрарăмсем ку хутĕнче таксипе Ойкас ялне çитеççĕ. Пĕр киле кĕрсе унти хĕрарăма темĕн те пĕр каласа пĕтерсе вăйлах улталасçĕ. Хĕрарăм чикансене итлесе Перекет банкĕн Мăн Сĕнтĕрти филиалĕнчен хăйĕн счечĕ çинчен укçа илсе тухать. Çапла 20000 тенкĕ чикансене тыттарса ярать.

Ноябрь пуçламăшĕнче правур хĕрарăмсем каллех «ухутана» тухаççĕ. Малтанхи водительпе каласса татăлса Мишер ялне çитеççĕ. Кунта та хăйсен сценарийĕпех ĕçлеççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ сĕтел ещĕкĕнче упранă укçитенкине – 38000 тенкĕне пуçтарса тухса каяççĕ.

Çак ултавлă ĕçсемпе пуçарнă уголовлă ĕçе Муркаш район сучĕ кăçалхи январь уйăхĕнче пăхса тухрĕ. Раççей Федерацийĕн Уголовлă процесс кодексĕн 27 статйин 3 пунктĕнчи 1 пайĕпе килĕшӳллĕн район сучĕ чикан хĕрарăмĕсенчен пĕрин тĕлĕшĕпе ятарлă постановлени йышăнса ун тĕлĕшпе ĕçе чарса лартма йышăнчĕ. Çакă Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин 2013 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнчи 3500-6 номерлĕ «Об объявлении амнистии в связи с 20-летием принятия Конституции Российской Федерации» постановленийĕпе çыхăннă.

Иккĕмĕш хĕрарăм тĕлĕшпе суд уголовлă ĕç пăхса тухса вăл айăплине çирĕплетрĕ. Малтан та судпа айăпланнăскере (айăплав срокĕ вĕçленмен) 2 çул та 6 уйăхлăх ирĕкрен хăтарма йышăнчĕ. Икĕ пĕчĕк ача пуррине шута илсе, саккунпа килĕшӳллĕн хĕрарăмăн кĕçĕн ачи 14 çул тултарнă хыççăн айăплав пурнăçа кĕмелле. Унччен вара ăна вырăнти уголовлă инспекци тĕрĕслесе тăрĕ.

Çынсен йăнăшĕсене курса хăвăр йăнăш ан тăвăр: палламан çынсене киле ан кĕртĕр, çын пурлăхне те ан хапсăнăр.

А. АЛЕКСЕЕВА,
ЧР Муркаш район сучĕн судйи.

Прокуратурăра

Тăван тавралăха упрар

Çут çанталăка, вăл шутра вăрмана упрасси прокуратурăн приоритетлă задачисенчен пĕри пулса тăрать. Ку тĕлĕшри саккуна пăхăнасси епле пурнăçланнине контрольленĕ май иртнĕ çул район прокуратури хĕрĕх ытла тĕрĕслев ирттернĕ, вун ултă асăрхаттару тăратнă, 6 çынна административлă майпа ответ тыттарма палăртнă.

Район территорийĕнче вăрман лаптăкĕ сахал мар, çавна май саккуна пăснине вăхăтра тупса палăртассинче çынсен пулăшăвĕ те питĕ вырăнлă. Енчен те эсир вăрман сферинчи йĕркесĕрлĕх пирки илтнĕ-курнă пулсан пĕр тăхтаса тăмасăр район прокуратурине 62-1-05, шалти ĕçсен районти пайне 62-6-97, район администрацине 62-3-39 номерсемпе шăнкăравлăр.

Районăн хисеплĕ çыннисем, вăрман вăл – пĕрлехи пуянлăх, çавăнпа та ăна сиен куме парар мар, йĕркесĕрлĕхе пĕрле сирер – апла пулсан ăна упрама тăрăшар.

Çи виттисене юртан тасатăр

Февралĕн 14-мĕшĕнче район прокуратуринче ĕç ушкăнĕн черетлĕ ларăвĕ пулчĕ. Кун йĕркинчи тĕп ыйту пурăнмалли çурт-йĕр сферине пырса тиврĕ. Ларăва асăннă сферăпа çыхăннă ответлă ĕçченсем хутшăнчĕç.

Вăхăт çуркунне еннелле сулăнни ытларах та ытларах палăрать. Çавна май çанталăк улшăнăвĕпе çыхăннă хăш-пĕр самант çынсемшĕн хăрушлăх кăларса тăратма та пултарать. Лару ĕçне пĕтĕмлетнĕ май вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, районти организацисене çурт-йĕр çинчи тата ун çывăхĕнчи юрпа пăра вăхăтра тасаттарассине кая юлмасăр йĕркелеме сĕннĕ. Çӳлтен татăлса аннă пăр е юр çынсен сывлăхĕшĕн пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Çавăн пекех кунта çынсен хăйсен питĕ асăрхануллă пулмалла, ачасене те çакăн çинчен каласа ăнлантармалла.

П. МАКЕЕВ,
прокурор пулăшуçи.

Внимание!
Только 1 день!
3 марта
в РДК с. Моргауши
с 10-00 до 18-00 ч.
состоится грандиозная ярмарка-распродажа
КОНФИСКАТ
Напрямую из портов Одесса (Украина)
- Обувь муж., жен. (зима-весна) - от 400 руб.
- Ветровки, плащи, кож. куртки муж., жен. (зим-веснаа) - от 500 руб.
- Комплекты постельного белья (бязь) - от 300 руб.
- Пледы, покрывала, подушки, одеяла (бамбук).
- Халаты, футболки, сорочки, майки.
- Нижнее белье, полотенца, носки, колготки.
- Детский трикотаж (Турция, Украина, Россия)
- Спецодежда (камуфляж), шапки, перчатки, варежки.

ИП Халилов Х.А.

* * *

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83. 10-10.

* * *

Çулталăкри икĕ тынашки сутатпăр, пĕри хура-шурă, тепри хĕрлĕ-шурă тĕслĕ. Мăн Хураçка ялĕ. Тел.: 8-906-136-16-05.

Прогноз погоды

	среда 26 февраля				четверг 27 февраля				пятница 28 февраля				суббота 1 марта				воскресенье 2 марта		
Местное время	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16	22	04	10	16
Облачность %																			
Осадки мм																			
Температура °С	-5	-5	-3	-7	-10	-6	-4	-8	-11	-7	-4	-8	-10	-8	-4	-6	-8	-8	-5
Давление мм	762	762	761	761	760	760	759	758	757	757	756	756	756	757	757	757	756	755	755
Влажность %	87	87	81	87	80	79	78	83	79	80	75	81	77	76	77	85	86	89	82
Ветер м/сек	4	2	3	3	3	2	3	3	3	3	3	4	3	3	3	4	3	4	4
	З	Ю-З	З	Ю-З	Ю-З	Ю	Ю-З	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю	Ю
Солнце восход / заход		07:50	18:20			07:48	18:23			07:45	18:25			07:43	18:27		07:40	18:29	
Луна восход / заход		05:47	14:42			06:23	16:06			06:53	17:32			07:19	18:59		07:43	20:23	

Çар ĕçне вĕренме

ЧР Шалти ĕçсен министерстви Раççей ШĔМ-ĕн аслă пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсене тата шалти хĕç-пăшал çарĕсен çар институчĕсене вĕренме кĕме кандидатсене палăртма пуçланă.

Çак вĕренӳ учрежденийĕсене 25 çул тултарман РФ гражданĕсене, çĕр-шывăн патшалăх чĕлхине пĕлекен, РФ нормативлă право акчĕсенче палăртнă квалификаци требованийĕсене тивĕçтерекен, ĕçлес тата харпăр хăйĕн пахалăхĕпе, ӳт-пӳ аталанăвĕпе, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен шалти ĕçсен пайĕн сотрудникăн тивĕçĕсене пурнăçлама пултаракансене экзаменсем тата конкурс хыççăн йышăнаççĕ.

Абитуриентсен пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ илни, пуçламăш е вăтам професси пĕлĕвне илни кирлĕ; ӳт-пӳ аталанăвĕ тата сывлăх тĕлĕшпе шалти ĕçсен органĕсенче ĕçлеме юрăхли тата патшалăх пĕрлехи экзаменĕсен результачĕсем кирлĕ.

Тĕплĕнрех РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайне 8(83541)62-9-60 номерпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пултаратăр.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 6-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 10-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 14-23.

«ВИКТОРИЯ – ОКНА» ИП Шишкин
Пластиковые окна, натяжные потолки, металлические двери, жалюзи, матрасы, эковата.
Скидка на все – 40%. Тел.: 8-937-955-33-00. 7-10.

выгодные
ЗАЙМЫ
- пенсионерам
- на развитие подсобного хозяйства
- под залог а/м, на покупку а/м
- на хозяйственные нужды

Кредитный потребительский кооператив “Содружество”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
62-6-86, 8 900 333 0001
для пайщиков кооператива

Продаю сено в рулонах, первый укос. Тел.: 8-961-340-55-68. 5-5.

* * *

26, 27, 28 февраля в магазине «Модный базар», «Одежда» – большие скидки на весь ассортимент товара. Мы находимся напротив магазина «Визит». Тел.: 8-937-377-77-27.

* * *

Çулталăкри хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-906-135-60-31.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 3-3.

* * *

14 уйăхри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-854-23-28. 2-2.

* * *

Уйăхри вăкăр сутатăп. Тел.: 8-937-951-76-10.

* * *

Большесундырскому райпо срочно требуются продавцы для работы в магазинах с. Большой Сундырь: «Дружба», «Продукты», «Сельхозпродукты»; в Кадикасинском магазине, в Кубасинском магазине «Продукты»; буфетчицы для работы в «Шашлычной» д. Калайкасы, в «Баре» д. Москакасы. Обращаться в отдел кадров райпо, тел.: 69-5-46.

* * *

Приглашаем специалистов на монолит в г. Санкт-Петербург. Тел.: 8-919-651-57-46.

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 25.02.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5074.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.